26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
3
ЮНКУН
219(6456) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

Виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ çинчен Англипе Совет Союзĕ тата Америка пĕлтерни

1943 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшне çитиччен Мускавра Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсен—Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Министрĕн К. Хэлл господинăн, Пĕрлешÿллĕ Королевство Министрĕн А. Иден господинăн тата Совет Союзĕн Халăх Комиссарĕн В. М. Молотовăн конференцийĕ пулса иртрĕ, конференци 12 лару туса иртерчĕ.

Министрсемсĕр пуçне конференци ĕçне çаксем хутшăннă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем енчен—США Посолĕ Аверелл Гарриман господин, Пĕрлешÿллĕ Штатсен çарĕ енчен генерал-майор Джон Р. Дин, Грин Хэкворд господин, Джемс Данн господин тата экспертсем,

Пĕрлешÿллĕ Королевство енчен—Унăн Величествин Посолĕ сэр Арчибальд Кларк Керр, Вильям Стрэнг господин, генерал-лейтенант сэр Хэстинго Исмей тата экспертсем

тата Совет Союзĕ енчен—Маршал К. Е. Ворошилов, Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Я. Вышинский тата М. М. Литвинов, Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. А. Сергеев, Генеральнăй штабран генерал-майор А. А. Грызлов, НКИД-ăн ответлă работникĕ Г. Ф. Саксин тата экспертсем.

Кун йĕркине виçĕ Правительство сÿтсе-явма тăратнă пур ыйтусем те кĕнĕ. Çав ыйтусенчен хăшпĕрисене татăклăн татса памалла пулнă, вăл ыйтусене татса панă. Тепĕр ыйтусем тăрăх вĕсене сÿтсе-явнă хыççăн тĕп принципсене йышăннă, вĕсене тĕплĕн сÿтсе-явса татса парасси дипломатиллĕ майпа е ятарласа тунă комиссисенче пулса иртмелле. Виççĕмĕш ыйтусем тăрăх пĕр-пĕрин шухăшне çеç пĕлмелле пулнă. Совет Союзĕн, Пĕрлешÿллĕ Королевствăн тата Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствисем пĕрлешсе вăй хурса вăрçă вăрçас тĕлĕшри пур ыйтусенче те пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçленĕ, апла пулин те виçĕ Правительствăн Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсем çакăн пек канашлăва чи малтанхи хут ирттерме пултарчĕç.

Германие тата унăн Европăри тарçисене хирĕç пыракан вăрçă срокĕсене чакарас тĕлĕшпе тумалли мероприятисем тăрăх татăклă та ăшă кăмăллă дискуссисем пулса иртрĕç. Тивĕçлĕ генеральнăй штабсен начальникĕсен представителĕсем—çар советникĕсем пулнипе усă курса, тĕрлĕ вăрçă операцийĕсем пирки тăракан ыйтусене сÿтсе-явнă, çав ыйтусем тĕлĕшпе решенисем йышăннă тата килес вăхăтра виçĕ çĕршыв хушшинче вăрçă тĕлĕшпе тачă çыхăну тытмашкăн никĕс хывса хатĕрленĕ.

Вăрçа хăвăртрах пĕтересси чи пирвайхи тĕллев пулса тăнине йышăнса, виçĕ Правительство çакăн пирки те пĕр кăмăллине палăртнă: вĕсен нациллĕ интересĕсемшĕн тата мире юратакан мĕнпур нацисен интересĕсемшĕн хальхи тачă çыхăнăва, вăрçă вăрçас майпа тата вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăнхи тапхăр валли тунă çыхăнăва, малашне те тытса пыни питĕ кирлĕ, çапла тусан кăна мирлĕ пурнăçа тытса тăма тата харпăрхăй халăхĕн экономикăллă тата социальнăй ырлăхĕсене туллин аталантарма пулать.

Çак шухăша декларацире кăтартса панă, çав деклараци çумне конференци пынă вăхăтрах ĕнтĕ Китай Правительстви пĕрлешнĕ, вăл декларацие хăйсен Правительствийĕсен ячĕпе виçĕ Министр тата Китайăн Мускаври Посолĕ алă пуснă. Çак паян пичетленекен деклараци тăватă государство тăшмансене хĕçпăшалсăрлатас тата парăнтарас тĕлĕшри мĕнпур ыйтусенче тата вăрçă вăрçас ĕçре татах та таччăнрах çыхăнса ĕçлессине палăртса хăварать, тăватă Правительство килĕшнĕ тăрăх пĕтĕм тĕнчери туслăхпа хăрушсăрлăхăн анлă системи таянса тăмалли принципсене палăртса хăварать. Çав системăна мире юратакан ытти государствăсене, пысăккисене те пĕчĕккисене те, кĕртме палăртса хăварнă. Конференци çакăн пирки калаçса татăлнă: вăрçă пынă вăхăтра Европăра сиксе тухакан ыйтусене вĕреннĕ чухне виçĕ Правительство хушшинче тачă çыхăну тытма май паракан йĕрке туни кирлĕ. Çак шутпа конференци Европăри Консультаци Комиссине тума йышăннă, вăл Лондонра ĕçлемелле, çав Комисси çÿлте асăннă ыйтусене вĕренмелле тата виçĕ Правительство валли пĕрле тунă рекомендацисем хатĕрлемелле. Çавăн пекех тата, кирлĕ чухне, виçĕ государствăн представительствисем тивĕçлĕ столицăсенче дипломатиллĕ майсемпе пĕр-пĕринпе калаçса татăлассине малалла та туса пыма палăртнă.

Министрсем, малалла, Итали ыйтăвĕсем тăрăх Консультаци Совечĕ туса хума йышăннă, вăл Совет малтанлăха виçĕ Правительствăн тата Француз халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн представителĕсенчен тăмалла. Çав Совета Греципе Югослави представителĕсене кĕртме палăртнă, çак вăрçă вăхăтĕнче вĕсен территорине фашистла Итали тапăнса кĕнине пула Грецине Югославин уйрăм интересĕсем пуррине шута илнĕ. Çав Совет, вăрçă ыйтăвĕсемсĕр пуçне, кашни кулленхи ыйтусемпе ĕçлемелле, Итали тĕлĕшпе союзниксен политикине çыхăнтарас енĕпе рекомендацисем çырса хатĕрлемелле.

Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ Министрĕ, паян пичетленекен çак декларацие йышăнса, хăйсен Правительствисем Италире çĕнĕрен демократи туса хурасшăн пулнине çирĕплетсе пама кирлĕ тесе йышăннă.

Министрсем тата хăйсен Правительствисен тĕллевĕ — Австрие каллех никама пăхăнман çĕршыв туса хурасси пулни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсем çакăнпа пĕрлех тата Австрие çакăн çинчен асăрхаттарнă: ыйтăва йăлтах татса панă чухне Австрия хăйне ирĕке кăларас тĕлĕшпе хăй мĕн тунине те шута илĕç, тенĕ. Австри пирки йышăннă деклараци кунта пичетленет.

Министрсем конференци пынă вăхăтра Рузвельт президентăн, Черчилль премьер-министрăн тата Совет Правительствин пуçлăхĕн Сталинăн декларацине пичетлесе кăларнă. Çав декларацире çакăн çинчен чаплăн асăрхаттарнă: Германин кирек мĕнле правительствине те перемири панă чухне çапла тăваççĕ: Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем тытса илнĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсене, çынсене асаплантарса вĕлерес ĕçсене мĕнле те пулин хутшăннă Германи офицерĕсемпе салтакĕсене тата гитлерла партин членĕсене, çав калама çук хăрушă преступленисене хăш çĕршывра тунă, çавăнта илсе каяççĕ, вĕсене çав çĕршывсен законĕсем тăрăх айăплама май пултăр тесе çапла тăваççĕ.

Конференцин пур ĕçĕсем те пĕр-пĕрне шанса пĕр-пĕрне ăнланнă атмосферăра пулса иртнĕ. Çавăн пек атмосферăра ытти паха ыйтусене те—кулленхи ыйтусене те, гитлерла Германие тата унăн союзникĕсене малашне мĕнле тыткалас, экономика тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес тата пĕтĕмĕшле мир тăвас ыйтусене те сÿтсе явнă.

Пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх пирки тăватă государство йышăннă деклараци

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕн тата Китайăн Правительствисем,

пĕрлешÿллĕ нацисен 1942-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнчи тата ун хыççăнхи декларацийĕсенче кăтартнă тăрăх, хăйсемпе вăрçакан тĕнĕл держависем пĕр сăмахсăрах парăнниччен вĕсене хирĕç вăрçă ĕçĕсем туса пыма пĕрлешнĕскерсем;

хăйсене те, хăйсемпе союзлă халăхсене те агресси хăрушлăхĕнчен хăтарас тĕлĕшпе хăйсем ответлă пулса тăнине туйса тăрса;

вăрçă вăхăтĕнчен мирлĕ вăхăта хăвăрт та йĕркеллĕ куçма кирлине, пĕтĕм тĕнчере мирпе хăрушсăрлăх туса вĕсене сыхласа тăма кирлине тата вăл вăхăтра тĕнчере хĕçпăшалсем тумашкăн çынпа экономика ресурсĕсене май килнĕ таран сахал тăрах парса тăма кирлине йышăнса;

пĕрле çапла пĕлтереççĕ:

1. Хăйсен тăшманĕсене хирĕç вăрçмашкăн пĕрлешсе тăвакан ĕçĕсене вĕсем малалла тăсаççĕ, мирпе хăрушсăрлăх туса хурас тата вĕсене сыхласа усрас тĕлĕшпе те пĕрле ĕçлеççĕ.

2. Пĕрлехи тăшмансемпе вăрçаканнисем çав тăшмансене парăнтарас тата хĕçпăшалсăрлантарас ыйтусем тĕлĕшпе те пĕрле ĕçлеççĕ.

3. Тăшман умне тăратнă условисене кирек мĕнле пăснине хирĕç те вĕсем хăйсем йышăнма шутланă мерăсене пурнăçа кĕртеççĕ.

4. Вĕсем пĕтĕм тĕнчере мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмашкăн кĕске вăхăтрах пĕтĕм тĕнчери пĕтĕмĕшле организаци тума кирлĕ тесе шутлаççĕ, ăна мĕнпур мирлĕ государствăсем пĕртан шутланса тăнă йĕркепе тумалла, çавăн пек государствăсем — пысăккисем те, пĕчĕккисем те—çав организацин членĕсем пулма пултараççĕ.

5. Вĕсем пĕр-пĕринпе, лару-тăру хушсан вара нацисен пĕрлешĕвĕн ытти членĕсемпе те, канашла-канашла илĕç, вĕсем пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха тытса тăмашкăн тата нацисен интересĕсемшĕн пĕрле ĕçлемеллине асра тытса тăрĕç, çак йĕрке вăл законпа йĕркелĕх туса хуриччен тата пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăхăн системине туса хуриччен пырĕ.

6. Вăрçă пĕтсен, вĕсем ытти государствăсен территорийĕсенче хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе усă курмĕç, çав вăйсемпе вĕсем пĕр-пĕринпе канашланă хыççăн кăна тата çак декларацире кăтартнă тĕллевсене пурнăçламашкăн кăна усă курĕç.

7. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта хĕçпăшалсем тăвас ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле килĕшÿ тăвас тесе, вĕсем пĕр-пĕринпе тата пĕрлешÿллĕ нацисен ытти членĕсемпе те канашла-канашла илĕç тата пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлĕç.

В. МОЛОТОВ,
КОРДЭЛЛ ХЭЛЛ,
АНТОНИ ИДЕН,
ФУ БИН-ЧАН.

Мускав, 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕ.

Итали пирки йышăннă деклараци

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Пĕрлешÿллĕ Королевствăн тата Совет Союзĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем çакна палăртнă: Итали тĕлĕшпе союзниксен политики çак тĕп принцип çинче никĕсленсе тăмалли пирки вĕсен виçĕ Правительстви пĕтĕмĕшпех килĕшеççĕ: фашизма, унăн усал влиянине тата вăл тунă ĕçсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартмалла, Итали халăхне хăйĕн правительство учрежденийĕсемпе ытти учрежденийĕсене демократи йĕркипе туса лартма тулли ирĕк памалла. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Пĕрлешÿллĕ Королевствăн ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсем çапла калаççĕ: Итали территорине пырса кĕнĕрепе вĕсен Правительствисем, васкаса пурнăçламалли вăрçă ыйтăвĕсем ирĕк панă таран, çав политикăна тытса пынă. Виçĕ Правительствăн ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсем çакăн пирки килĕшнĕ: çав политикăна пурнăçа кĕртсе пынă чухнех малашне çак кирлĕ мерăсене пурнăçламалла:

1. Итали правительствине демократиллĕрех тумалла, çакна тума вăл правительствăна Итали халăхĕн яланах фашизма хирĕç тăнă сийĕсен представителĕсене кĕртмелле.

2. Итали халăхне сăмах, тĕн, политикăллă шухăш, пичет тата пуху ирĕклĕхĕсене пĕтĕмпех тавăрса памалла. Итали халăхĕн фашизма хирĕçле политикăллă ушкăнсем тума право пулмалла.

3. Фашизм йĕрки тунă учрежденисемпе организацисене пурне те пĕтерсе лартмалла.

4. Фашистла çынсене тата вĕсем майлă шухăшлакансене тытăм учрежденийĕсенчен е халăхпа çыхăнса тăракан учрежденисемпе администрацисенчен кăларса ямалла.

5. Политикăллă ĕçсемшĕн фашистла йĕрке тытса хупнă çынсене пурне те ирĕке кăлармалла, вĕсене йăлтах каçармалла.

6. Вырăнти тытăмăн демократиллĕ организацийĕсене тумалла.

7. Фашистсен пуçлăхĕсене тата ытти çынсене, вĕсем вăрçă преступленийĕсем туни паллă пулсан е вĕсем çав преступленисене тунă тесе шутлама май пулсан, арестлесе суд аллине памалла.

Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ Министрĕ, çак декларацие йышăнса, çапла калаççĕ: маларах кăтартнă принципсене Италире вăрçă ĕçĕсем пĕтиччен хăсан пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май пуррине союзниксен Главнокомандующийĕ кăтартса парать, вăл ăна пĕрлешÿллĕ штаб урлă илнĕ кăтартусене шута илсе палăртать.

Çак деклараци çине алă пуснă виçĕ Правительство, вĕсенчен кирек хăшĕ ыйтсан та, çак ыйтупа пĕр-пĕринпе канашласа илĕç.

Тата çакна асра тытмалла: ку декларацире калани Итали халăхне малашне тытăмăн хăй кăмăлланă формине йышăнма чармасть.

Австри пирки йышăннă деклараци

Пĕрлешÿллĕ Королевствăн, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствисем çакăн пирки пĕр-пĕринпе килĕшрĕç: Австрие, гитлерла агрессие пула хăйĕн ирĕклĕхне чи малтан çухатнă çĕршыва, Германи пусмăрлăхĕнчен ирĕке кăлармалла.

Германи, вăйпа ирĕксĕрлесе, Австрие 1938 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче хăй çумне пĕрлештернине виçĕ çĕршыв Правительствисем чăн мар тата тĕрĕс мар тесе хаклаççĕ. Çав кун хыççăн Австри тĕлĕшпе пулса иртнĕ нимĕнле улшăнăва та вĕсем пăхăнма тивĕçлĕ тесе шутламаççĕ. Вĕсем çапла пĕлтереççĕ: вĕсем ирĕклĕ те никама пăхăнман Австрие тепĕр хут ура çине тăратнине курасшăн тата çапла майпа Австри халăхне, çавăн пекех тата çак ыйту тухса тăма тултаракан ытти кÿршĕллĕ государствăсене те, политикăпа экономика енĕпе хăрушсăрлăх тупма май парасшăн тăрăшаççĕ. Çав хăрушсăрлăх мирлĕ çирĕп пурнăçăн пĕртен пĕр никĕсĕ пулса тăрать.

Анчах та, Австрин çакна асра тытмалла: вăл гитлерла Германи енче пулса вăрçă вăрçнăшăн ответ тытассинчен пăрăнма пултараймасть, тата мире татăкланах йĕркелесе янă чухне вăл хăйне ирĕке кăларассишĕн хăй тунă ĕçсене пурпĕрех шута илеççĕ.

Гитлеровецсене вĕсем тăвакан тискер ĕçсемшĕн ответ тыттарасси пирки йышăннă деклараци

Гитлеровецсен хĕçпăшаллă вăйĕсем хăйсем тытса илнĕ нумай çĕршывсенче тискер ĕçсем туни, халăха вĕлерни тата массăллăн асаплантарса вĕлерни çинчен Великобритани, Пĕрлешÿллĕ Штатсем тата Совет Союзĕ тĕрлĕ çĕртен пĕлтерÿсем илнĕ. Çав тытса илнĕ çĕршывсенчен халĕ гитлеровецсене татăклăнах хăваласа кăлараççĕ. Гитлерла пусмăрлăхăн хаярлăхĕ çĕнĕ факт пулса тăрать, тата вĕсен влаçĕ айĕнче пурăнакан мĕнпур халăхсемпе территорисем гитлеровецсем террорпа усă курса хуçаланнин чи усал формине пула асап курнă. Çĕнни çакăнта пулса тăрать: çав территорисенчен нумайĕшне халĕ аслă çĕршывсен малалла куçса пыракан çарĕсем ирĕке кăлараççĕ, чакса пыракан гитлеровец-туннсем çав тери урса кайса хăйсен тискер хаярлăхне татах та вăйлатаççĕ. Совет Союзĕн, çавăн пекех тата Франципе Италин гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă территорийĕсенче тунă тискер ĕçсем çавна халĕ уйрăмах уççăн çирĕплетсе параççĕ.

Çакна шута илсе, союзлă виçĕ çĕршыв, пĕрлешнĕ вăтăр икĕ нацин интересĕсене хÿтĕлесе, хăйсен аялахра çырнă декларацийĕпе çакăн çинчен чаплăн пĕлтерсе асăрхаттараççĕ:

Германире пулма пултаракан кирек мĕнле те пулин правительствăна кирек мĕнле те пулин перемири тума май панă вăхăтра Германи офицерĕсемпе салтакĕсене тата нацистсен партин членĕсене, çÿлте асăннă тискер ĕçсемшĕн, вĕлерÿсемшĕн тата асаплантарнисемшĕн ответлăскерсене, е çав тискер ĕçсене тунă çĕре хăйсен ирĕкĕпе хутшăннăскерсене,— хăйсем ирсĕр ĕçсем тунă çĕршывсене каялла яраççĕ; вĕсене унта çав ирĕке тухнă çĕршывсемпе унта туса хунă ирĕклĕ правительствăсем хăйсен законĕсем тăрăх суд туса айăплаççĕ. Çÿлте асăннă мĕнпур çĕршывсенчен, уйрăмăнах Совет Союзĕн оккупациленĕ пайĕнчен, Польшăпа Чехословакирен, Югославипе Грецирен, Крит тата ытти утравсене те кĕртсе, Норвегирен, Данирен, Нидерландсенчен, Бельгирен, Люксембургран, Францирен тата Италирен илнĕ пĕлтерÿсем тăрăх айăплă гитлеровецсен списокне май пур тарах тĕплĕн тăваççĕ.

Çапла вара, Итали офицерĕсене массăллăн пере-пере вĕлернĕ çĕрте е Францин, Нидерландсен, Бельгин тата Норвегин заложникĕсене е Крит хресченĕсене асаплантарнă çĕрте пулнă нимĕçсем, е тата Поль-

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Ĕçĕнни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, патшалăха тыră парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыраканисен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене çырас:

51. Елчĕк районĕнчи «Ново-Тоскаево» колхоз (колхоз председателĕ Кириллов юлташ). Ку колхоз тыră вырас тата кĕлтесене капана хывас ĕçсене вăхăтра пĕтерчĕ. Сентябрь уйăхĕнче авăн çапса пĕтерчĕ, Патшалăха тыră парса татнă. Кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ.

52. Елчĕк районĕнчи «Красный Восток» колхоз (колхоз председателĕ Чебоксаров юлташ). Ку колхоз тыră вырас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене ăнăçлăн туса пĕтерчĕ. Патшалăха тыră срокчен парса татнă. Кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ.

53. Елчĕк районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ Лявин юлташ). Колхоз тыră вырас тата кĕлтесене капана хывас ĕçсене вăхăтра пĕтерчĕ. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ. Патшалăха тыră срокчен парса татнă.

54. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ Зайцев юлташ). Колхоз мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтерчĕ. Планра кăтартнă 360 гектар вырăнне 500 гектар кĕрхи çĕртме турĕ. Патшалăха тыră парса татнă.

55. Елчĕк районĕнчи «Красный воин» колхоз (колхоз председателĕ Никифоров юлташ). Ку колхоз тыră вырас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене туса пĕтерчĕ. Патшалăха тыră парса татнă.

56. Советски районри «Восток» колхоз (колхоз председателĕ Андреев юлташ). Колхоз тыră вырас ĕçсене çапса пĕтерчĕ. Сентябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне патшалăха тыră парса татнă.

57. Советски районри «1-ое Мая» колхоз (колхоз председателĕ Афанасьев юлташ). Колхоз тыră вырас ĕçсене срокра тыră пĕр тăххă çухатмасăр вырса, çапса пĕтерчĕ. Колхоз ялхуçалăх продукчĕсем те парса татнă, 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 38 центнер тырă панă.

Хĕрлĕ Çар генералĕсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи плацдарма лайăх çирĕплетнĕшĕн тата çав ĕçсенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн çак çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар генералĕсене, офицерсен, сержантсен тата рядовой составне, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине пĕтĕмпе 183 çынна панă. (ТАСС).

* * *

Нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне татса кĕрес тĕлĕшпе Командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, Мелитополь хулине ирĕке кăларнăшăн тата çав ĕçсенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн çак çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар генералĕсен, офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовойĕсен ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Пĕтĕмпе Совет Союз Геройĕн званине 71 çынна панă. (ТАСС).

* * *

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи плацдарма лайăх çирĕплетнĕшĕн тата çав ĕçсенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн çак çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар генералĕсен, офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовой составĕн ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине пĕтĕмпе 33 çынна панă. (ТАСС).

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине пани

1943 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнче Елчĕк районĕнчи старши ветеринарнăй врача Александр Иванович Улендеев юлташа менингитпа чирленĕ лашасене сыватмалли çĕнĕ меслетсем тупассишĕн çине тăрса ĕçленĕшĕн тата лашасем менингитпа чирлессине хирĕç кĕрешес ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парĕç. Хисеплĕ грамота панă çĕрте республикăри ветеринари врачĕсем 20 çын пулчĕç.

А. И. Улендеев, Хисеплĕ грамота илсе, çапла каларĕ:

— Хисеплĕ грамотăпа наградăласа чысланăшăн эпĕ партипе правительствăна пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. Пирĕн ĕç — питех те ответлă ĕç. Эпир кулленех ĕçре пуçарулăх кăтартма, ĕçе лайăхлатса пыма тивĕçлĕ. Эпĕ выльăх чирĕпе кĕрешнĕ çĕрте малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕп, республикăри ытти ветеринари врачĕсене те лайăхрах ĕçлеме чĕнетĕп.

Ун хыççăн Чăваш АССР Наркомземĕн ветеринари Управленийĕн начальникĕ Кириллов, ВКП(б) Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен заместителĕ Мартынов юлташсем сăмахсем каларĕç. Вĕсем ветеринари врачĕсене выльăх-чĕрлĕхе мĕнпур чирсенчен сыватмалли лайăхрах меслетсене шырас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме чĕнчĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Улендеев юлташа Хисеплĕ грамота илнĕ ятпа саламларĕ, малашнехи ĕçре ăнăçусем тума сунчĕ тата мĕнпур ветеринари работникĕсене выльăх-чĕрлĕх чирĕсене хирĕç татăклăн кĕрешме, выльăх-чĕрлĕхе сыватас тĕлĕшпе çĕнĕрен те çĕнĕ майсем шырама чĕнчĕ.

Докладчиксем колхозсене тухса кайрĕç

СЕНТЕР, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕнер кунта Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул çитес умĕн доклад тăвакансем валли инструкциллĕ семинар пулса иртрĕ. Ăна ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ ирттерчĕ. Унта агитколлективсен руководителĕсем, район центрĕнчи партипе совет тата комсомол активĕ пулчĕç.

ВКП(б) райкомĕн планĕ тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче районри мĕнпур колхозсемпе учрежденисенче Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен докладсем туса ирттермелле. Паян райцентртан 20 докладчик колхозсене тухса кайрĕç. Çавăн пекех ялти учительсемпе медицина работникĕсене — 80 çынна ытла докладчиксем пулма çирĕплетнĕ. Вĕсене ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» кĕнекине, «Советлă Чăваш республики Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле» ятлă кĕнекене панă.

А. СОЛОВЬЕВ.

Гитлеровецсем хăйсем тăвакан тискер ĕçсемшĕн ответ тытасси пирки йышăннă деклараци

(МАЛАЛЛИ)

ша халăхне вĕлере-вĕлере пĕтернĕ çĕрте, е Совет Союзĕн халĕ тăшмантан тасатакан территорийĕсенче халăха вĕлерсе пĕтернĕ çĕрте пулнă нимĕçсем çакна пĕлсе тăма тивĕçлĕ: вĕсене хăйсем айăплă ĕçсем тунă вырăна каялла яраççĕ те вĕсене унти халăхсем вырăнта суд туса айăплаççĕ.

Хăйсен аллисене айăпсăр юнпа варалама ĕлкĕреймен гитлеровецсем çакна шута илччĕр, айăплисен шутĕнче пулас мар тесе тăрăшчăр, унсăрăн вĕсене виçĕ çĕршыв çут тĕнче хĕрринче те пур-пĕрех тупаççĕ тата тĕрĕслĕхпе суд тума вĕсене айăплакансен аллине параççĕ.

Çак деклараци тĕп преступниксем пирки тăракан ыйтăва пырса тивмест, мĕншĕн тесен вĕсен преступленийĕ мĕнле те пулин географиллĕ вырăнпа çыхăнса тăмасть, çавăнпа вĕсене Правительство-союзниксем пĕрле йышăннă решени тăрăх айăпласа чаказани параççĕ.

РУЗВЕЛЬТ,
СТАЛИН,
ЧЕРЧИЛЛЬ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 1‑мĕшĕнче ДНЕПР шывĕпе СИВАШ çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем каялла чакакан тăшмана хăваласа пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра НИКОЛАЕВКА, МАРЬИНСК, ЗАПАДНЫЕ КАИРЫ, ЛЮБИМОВКА, ЧЕРНЕНЬКА, ПРЕОБРАЖЕНКА, МАКАРОВКА, ПЕРВО‑КОНСТАНТИНОВКА, СТРОГАНОВКА, ПЕРЕКОП, ИВАНОВКА, НОВО‑НИКОЛАЕВКА, НОВАЯ ПОКРОВКА, ГРОМОВКА, БЛАГОВЕЩЕНКА, ЗАХАРОВКА, НОВАЯ ДМИТРИЕВКА ятлă пысăк ялсене тата САЛЬКОВО ятлă чугун çул станцине илнĕ. ПЕРЕКОП перешеекĕнче пирĕн çарсем çав тери вирлĕн пырса çапнă та хăйсене хирĕç тăракан тăшман чаçĕсене ывăтса янă, Турецкий Вала тытса илсе, АРМЯНСК хули патнелле татса кĕнĕ. Çапла ĕнтĕ, тăшманăн Крымра тăракан çарĕсен типĕ çĕрпе каялла чакмалли çулĕсене пирĕн çарсем татса пăрахнă. Пирĕн çарсем пыра‑пыра çапнипе каялла хăвăрттăн чакса пырса, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату тӳсет. Пĕр октябрĕн 31‑мĕшĕпе ноябрĕн 1‑мĕшĕнче кăна пирĕн çарсем тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр‑хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, саплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

КРИВОЙ РОГ хули енче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем тăвакан контратакăсене сире‑сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 31‑мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕпе Сиваш çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем çапплах ăнăçлă наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕç çарĕсен пĕр ушкăнне çавăрса илнĕ те халĕ çав ушкăна пĕтерессшĕн çапăçаççĕ. Тăшмана питĕ пысăк çухату кӳреççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 29 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă тата 28 хир туппине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 60 тупă, хăй тĕллĕн çӳрекен темиçе тупă, автоматсемпе тягачсем нумай, боеприпассен тата апат‑çимĕçĕн 7 складне тытса илнĕ. Октябрĕн 31‑мĕшĕпе ноябрĕн 1‑мĕшĕнче тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Перекоп перешеекĕнче пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, Турецкий Вал патне тухнă. Турецкий Вал тăрăхĕнче нимĕçсем темĕн чухлĕ траншейăсемпе окопсем туса тултарнă. Çак тĕреклĕ позицисемпе усă курса, нимĕçсем пирĕн наступлени туса пыракан çарсене чарса лартма хăтланнă. Пирĕн çарсем, çав тери вирлĕн пырса çапса, тăшмана çĕмĕрсе тăкнă та, Турецкий Вала тытса илсе, Армянск хули патне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Совет çарĕсем халĕ ĕнтĕ тăшманăн Крымра тăракан çарĕсен типĕ çĕр тăрăх каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе хунă, татса пăрахнă.

* * *

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровск хулинчен кăнтăр‑хĕвеланăçнерехре, пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтере‑çĕнтере малалла куçнă, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен темиçе яла ирĕке кăларнă. Çав ялсенчен пĕриншĕн çапăçнă чухне пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 8 танкне, «Фердинанд» йышши хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшман каялла чакнă, çапăçу хирĕнче нимĕçсен 400 вилли ытла вырттса юлнă, 16 хир туппипе 22 миномет тăрса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсем хăйсен лӳчĕркесе пĕтернĕ чаçĕсене пухнă та контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене хăйсен çывăхне пыма панă та минометсемпе, пулеметсемпе тата пăшалсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Тăшман ним йĕркисĕр каялла чакнă. Çав çапăçура нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă контратакăсене сире‑сире янă. Пĕр участокра нимĕçсем контратакăна 100 танка çити кĕртсе янă, вĕсене хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем тата мотопехота пулăшса пынă. Кунĕпех хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем тăшмана йывăр çухату кӳнĕ. Нимĕçсен 42 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 7 туппине [illegible]

гитлеровецсен темиçе контратакине сире‑сире янă, унта гитлеровецсем пĕр ял патне татса кĕрессшĕн пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла вырттса юлнă.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ пĕр чугун çулăн пысăк участокĕ çине минăсем лартса тухнă. Фронталла пыракан нимĕçсен эшелонĕ, çав минăсем çине пырса кĕрсе, ӳпĕнсе кайнă. Пĕр паровоз тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 12 вагонпа 10 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Чугун çулăн çав участокĕнче вара темиçе кун хушши поездсем çӳреймен. Партизансен çак ушкăнех тепĕр районра нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Инçене перекен тупăсем турттарса пыракан 19 платформа тата боеприпассем тиенĕ 2 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Юсама пынă поезд та, минăсем çине пырса кĕрсе, сирпĕнсе кайнă.

* * *

Нимĕçсен верховный главнокомандованине пăхăнса тăракан 1‑мĕш боевой отрядăн самолечĕ çинчен нимĕç пилотне Гойнц Тэлле лейтенанта тыткăна илнĕ. Çав лейтенант Тэлле çапла каласа панă: «Эпĕ вĕçев шкулĕнчен 1943‑мĕш çулхи август уйăхĕнче вĕренсе тухрăм. Шкултан вĕренсе тухнă летчиксене нумайĕшне Хĕвелтухăç фронтне ячĕç. Эпĕ пĕр вăхăтлăха Германире юлтăм, вара октябрĕн 15‑мĕшĕнче кăна Киева пырса çитрĕм. Эпĕ мĕн пурĕ те икĕ хутчен кăна вĕçсе тухса çапăçма пултартăм. Иккĕмĕш хут вĕçсе тухни маншăн юлашки вĕçев пулса тăчĕ. Вырăссем ман самолета персе ӳкерчĕç, хама тыткăна илчĕç. Манăн ытти юлташсен те шăпи çавăн пекех телейсĕр пулчĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн эпĕ 6 летчикпа çыру çӳретрĕм. Эпĕ вĕсемпе пĕр класра вĕреннĕччĕ. Анчах нумайччен çырса пурăнмалла пулмарĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенчен 5‑ĕшне вĕлернĕ те ĕнтĕ, 6‑мĕшĕ урасăр пулнă, халĕ госпитальре выртать. Юлашки вăхăтра нимĕç офицерĕсен чылай пысăк ушкăнĕ çапла шутлать: Германия ку вăрçăра аяла пулчĕ ĕнтĕ, теççĕ. Эпĕ фронтра тĕл пулнă летчиксем те чылайĕшĕ çак шухăшпа килĕшеççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Житомир облаçĕнчи Слевск хулинче тунă çĕнĕ тискер ĕçсем çинчен хыпар илнĕ. Гитлеровецсем нумаях пулмасть хулара çынсене хупăрласа илнĕ те алла лекнĕ чи малтанхи 125 çынна, вăл шутра арçынсемпе пĕчĕк ачасене те, персе пăрахнă. Октябрĕн 12‑мĕшĕпе 18‑мĕшĕ хушшинче фашистла нуçкасакансем çывăхри Жубровичи, Лопатичи, Болярка, Трудня, Быстрая ятлă ялсенче тата ыттисенче те темĕн чухлĕ çынна арестленĕ. Арестленĕ çынсене пурне те Слевскри тĕрмене хупса лартнă. Çак тĕрмере гестаповецсем вĕсене темĕн чухлĕ асаплантарнă. [illegible]

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Трактористсем ăмăртура

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Машинно‑тракторнăй станцинчи трактористсемпе трактористкăсем хушшинче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пычĕ. Нумай трактористсен куллен çитĕнĕвĕсем турĕç.

Мария Мурзакаева Георгий Степанов юлташсем, «СТЗ» тракторпа ĕçлесе, куллен норма 150—200 процент тултарса пычĕç. Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче вĕсем кашни 187‑шер гектар сухаласа вырăнне 250‑шар гектар сухаларĕç. Аристарх Федоров юлташ та трактора тулли усă курчĕ. Кăçал вăл 223 гектар сухаларĕ. Тракторист Федор Митрофанов ку тариничен 223 гектар сухаланă.

Юськасси участокĕнче ĕçлекенсем хушшинче тракторист Арсентий Иванов малта пырать. Вăл кĕрхи çĕртме тунă чухне, вăтамран илсен, куллен хи норма 150 процентран кая мар тултарнă. Кăçал Иванов юлташ «СТЗ» тракторĕпе 270 гектар сухаларĕ.

МТС‑ри А. Лукин, Е. Николаев юлташсен бригадисем, ăмăртса ĕçлесе, кăçалхи çулталăкри планĕсене октябрĕн 1‑мĕшĕ тĕлне тултарнă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем горючие те чылай перекетлерĕç.

Социализмлă ăмăрту пур бригадăсене те кирлĕ пек сарăлса пымасть‑ха. Ăмăрт бригадăсем ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене тултараймарĕç. Самакрин, Çулавăç участокĕнчи Миронов юлташăн бригади кăçалхи плана 60 процент çеç тултарнă. Кунта чылай тракторсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ. Юлашки вăхăтра Ехремкассинчи Н. Семенов юлташ бригадинчи трактористсем те чылай вăхăта ахаль тăрса ирттерчĕç.

Х. ЛИСИН

Çуракине хатĕрленетпĕр

Эпир кăçалхи çулла çулне ăнăçлă вĕçлерĕмĕр. Колхозниксемпе колхозницăсем, аслă çулпуç Сталин юлташ фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах апат‑çимĕç пама чĕннине яланах асра тытса, хăйсен мĕнпур вăйне çав ĕçе хураççĕ.

Августăн 25‑мĕшĕ тĕлне «Чăваш. ЦИК» колхоз пур йышши культурăсене те вырса пĕтерсе, капана хыврĕ. Октябрĕн 12‑мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр. Уборкăн виççĕмĕш кунĕнчех авăн çапма тытăнтăмăр. Ку ĕçре 2‑мĕш бригада (бригадирĕ А. Данилова юлташ) куннеçĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ. М. Никифорова, А. Алексеева колхозницăсем ĕç нормине виçĕ‑тăватă хут ытларах пурнăçласа пычĕç.

Октябрĕн 20‑мĕшĕ тĕлне пирĕн колхоз хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Выльăх витисене юсаса тухрăмăр. Хĕл каçмалăх апат хатĕрлерĕмĕр. Ку ĕçре уйрăмах старши конюх А. Никоноров, конюхсем В. Семенова, М. Степанова юлташсем пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлерĕç.

Эпир, колхозри пур ĕçсене те йĕркеллĕ туса пынипе пĕрлех, фронтовиксен çемьисемшĕн те тăрăшатпăр. Тăватă колхозницăна пĕрер пăру патăмăр. Çавăн пекех колхозри пулăшу кассин ĕçне те лайăхлатрăмăр.

Патшалăх умĕнчи пур парăмсене те парса татса, 1944‑мĕш çулшăн 10 центнер ашкакай патăмăр.

Халĕ колхозра килес çуракине хатĕрленетпĕр. Ялхуçалăх машинисене тирпейлĕн пухса, юсама тытăнтăмăр. Акмалли пур йышши культурăсене те сортласа пĕтертĕмĕр. Пирĕн колхоз членĕсем çитес çулта татах та вăйларах тырпул туса илессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ.

Г. ФЕДОТОВ,
Канаш районĕнчи «Чăваш. ЦИК» колхоз председателĕ.

Килес çулхи вăйлă тырпулшăн

Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз членĕсем çулталăк хушшинче тунă ĕçсене пăхса тухаççĕ. Тунă ĕçсен итогĕ чĕрене савăнтарать. Колхозниксен чи савăнăçлă итогĕ вăл — тăван çĕршыв умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен парса татни. Çак çĕнтерĕве «Победа» колхозри колхозниксем хĕрӳллĕн ĕçлесе турĕç. Кăçал туса илнĕ вăйлă тырпулăн никĕсне вĕсем иртнĕ кĕркунне хĕрӳллĕн ĕçлесе хывса хăварчĕç. Кĕрхи çĕртмене вĕсем пĕлтĕр ир тата лайăх туса хăварчĕç. Çĕртмен пĕтĕм пуссине тислĕк тăкса сухаларĕç. Акма чи лайăх тырра уйăрса хучĕç, ăна кĕркуннех сортласа, тасатса хучĕç. Çуракине тухиччен нумай вăхăт маларах пур машинăсене те тĕплĕн юсаса лартрĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем кĕркуннехе хĕллехи вăхăтра тимлĕн ĕçлени вара çуракине кĕске срокра тата лайăх туса ирттерме май пачĕ. Çавăнпа çураки хыççăнхи ĕçсене тума та, тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленме те вăхăт чылай пулчĕ, ĕçсене тĕплĕн туса пычĕç.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлени çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăртăва колхозниксем активлăн хутшăнчĕç. Ялхуçалăх çулне хăвăртрах вĕçлессишĕн, патшалăх умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн колхозниксем нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те чаранса тăмарĕç, кирек мĕнле çанталăкра та, куннеçĕрне пĕлмесĕр, тимлĕн ĕçлерĕç. Тырăсене 7 талăк хушшинче вырса пухрĕç. Кашни гектартан 100 пăта яхăн тырă илчĕç.

Кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене хăвăрт туса пыма колхозра транспорт бригади организацилерĕç. Бригада кĕлте турттарчĕ, патшалăха тырă леçрĕ. Хĕрсе тырă вырнă вăхăтрах колхоз патшалăха тырă парса татрĕ.

Анчах та колхозниксем çакăнпа лăпланса лармарĕç. Фронта пысăк пулăшу парас шухăш‑кăмăлпа çунса, патшалăха 1944‑мĕш çулшăн та 29 центнер тырă, 6.000 литр сĕт пачĕç; аш‑какая 1943‑мĕш çулшăн çеç мар, 1944 çулшăн та парса татрĕç тата 1945‑мĕш çулшăн та 10 центнер пачĕç.

Халĕ колхозра 1944‑мĕш çулхи çуркуннене хатĕрленеççĕ. Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ, вăрлăх сортлаççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, тислĕк пухаççĕ. «Победа» колхоз членĕсем 1944‑мĕш çулта тата тухăçларах тырпул туса илме хатĕрленеççĕ. Кăна та вĕсем тăваççех. Нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу парас вĕри шухăш‑кăмăл вĕсене çĕнĕ çитĕнӳсем туса ĕçлеме чĕнет.

М. ПЕТРОВ.

Кунта хĕле хатĕрленсе çитмен‑ха

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Сентябрĕн 25‑мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 25‑мĕшне çитиччен пынă фронтовой уйăхлăхра районри колхозсем выльăх‑чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем турĕç. Нумай колхозсем çĕнĕ витесем туса лартрĕç. Кăçалхи çул районĕпе 141 лаша, 108 ĕне, 125 пăру, 300 сурăх, 160 путек, 370 сысна хупмалăх çĕнĕ витесемпе выльăх картисем тунă. Çак ĕçсене тăвас тĕлĕшпе уйрăмах Атнашри Киров ячĕпе тăракан, Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чуракассинчи «III Интернационал» тата Чалкассинчи «Прожектор» колхозсем кăтартуллăн ĕçлерĕç.

Чалкассинчи «Прожектор» колхоз выльăх‑чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне çулсеренех ирттерсе тултарса пырать. Вĕсем кăçал та выльăх‑чĕрлĕхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе çитрĕç.

Кунта ĕне витисем пурте хатĕр. Кăçал 23 пăру валли пĕр вите тата 50 сысна валли икĕ вите çĕнĕрен туса лартнă. Сурăхсемпе ĕнесем, сыснасем хупса усракан кивĕ витесене те пĕтĕмĕшпех юсаса хатĕрлесе çитерне. Фермăсен заведующийĕ Александр Морозов, отечественнăй вăрçă инвалиджĕ, выльăх‑чĕрлĕхсене пăхас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Выльăхсене расписанипе кăтартнă вăхăтсенче апат парса, шăварса тата усăлтарса пыраççĕ.

Анчах та, выльăх‑чĕрлĕхсене хĕл каçарма епле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухас тĕлĕшпе пулнă икэрнелĕхре лайăх ĕçсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те нумай палăрчĕç. Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитнине тĕрĕслекен районри комисси палăртнă тăрăх, Шăхасан районĕнче тата 118 ĕне валли витесем çитмеççĕ. Районри хăшпĕр колхозсенче витесене юсаса хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Ешкильтри «Большевик» колхозра выльăх витисем çаплах юхăнса лараççĕ‑ха, вĕсен тăррисем ишĕлсе, кантăкĕсем ванса пĕтнĕ, шăтăк‑çуракĕсене те питĕрмен. Вĕсене юсаса хатĕрлес ĕçе халĕ те тытăнман. Çавăн пекех тата Малти Антавăшри, Пайкильтри «Активист» колхозсем те выльăх витисене хĕле валли хатĕрлесе çитермен. Çаксем вĕсем пĕтĕмĕшпех колхоз руководителĕсемпе фермăра ĕçлекенсем кахалланса ларнинчен, хăйсен ĕçĕн ответлăхне туймасăр пурăннинчен килеççĕ.

Хĕл çитсе килчĕ. Выльăх‑чĕрлĕх витисене юсаса хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Выльăхсене ăшă та çутă витесенче тата тутă хĕл каçармашкăн пур условисем те пулччăр.

Ст. АСЛАН.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 30‑мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн чылай секторĕсенче вăйлă çумăрсем çунă, вĕсем çарсене малалла куçма кансĕрленĕ тата çырмаçатраллă вырăнсенче çапăçусен йывăрлăхĕсене тата нумайрах ӳстернĕ. Тăшманăн йывăр артиллерийĕ хытă персе тăрать пулин те, фронтăн икĕ флангĕнче те малалла куçнă. Пиетравайрано тата Мондрагоне хулисене тытса илнĕ. Акăлчансен 8‑мĕш армийĕ кĕрешекен районра патрульсем çапăçнă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче союзниксен çарĕсем тăшманăн çирĕплетнĕ позицийĕсене тĕл пулнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 31‑мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: октябрĕн 26‑мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи карапĕсем Неаполь портне атакăлама хăтланнă, анчах та вĕсене хăваласа янă.

Пиллĕкмĕш арми çарĕсем тулăсăртлă вырăнта темиçе паха пункт тытса илнĕ. Саккăрмĕш арми фронтĕнче патрульсем çапăçнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 1‑мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен саккăрмĕш армийĕн чаçĕсем Сан‑Елена тата Сан‑Масимо ятлă пунктсене тытса илнĕ.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРИ ЛĂРУ‑ТĂРУ

НЬЮ‑ЙОРК, октябрĕн 31‑мĕшĕ. (ТАСС). «Нью‑Йорк таймс» хаçат çырнă тăрăх, итальянецсем Çурçĕр Итализен пинĕ‑пинĕпе кăнтăралла тараççĕ. Верона хулинче Итали салтакĕсем хăйсен казармисенче çирĕплленсе ларнă та икĕ кун хушши гитлеровецсене хирĕç тăнă, боеприпассем йăлтах пĕтсе çитсен тин парăннă. Веронăри чугун çул станцинче итальянецсен 300 салтакĕ гитлеровецсене хирĕç лешсем çапăçăва танксем кĕртсе яричченех çапăçса тăнă. Тарса тухнă çынсем каланă тăрăх, Удина районĕнче итальянецсен темиçе батальонĕ тусем хушшине тарнă. Халĕ вĕсем партизансемпе пĕрле гитлерла оккупантсене хирĕç кĕрешеççĕ. Итальянецсен мирлĕ çыннисем нумайĕшĕ çав отрядсене кайса кĕреççĕ.

ИТАЛИ САЛТАКĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМПЕ КĔРЕШЕÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1‑мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат çапла пĕлтерет: Комо районĕнчи вăрмансенче пытанса тăракан итальянец салтакĕсен пĕтĕм шучĕ пилĕк пинрен кая мар. Вĕсем унта лагерьсем тунă, гражданла халăхпа яланах çыхăну тытса тăраççĕ. Вырăнти гражданла халăх çав салтаксене апат‑çимĕç кăна мар, боеприпассем те тăрататать. Кăç пулсан, Комо, Лекко тата Белладжо хулисенчен пĕр нимĕç салтакĕ те ирĕкелле тухма хăяймасть. Комопа Лекко хулисем хушшинче поездсемпе пăрахутсем çӳреме пăрахнă. Комо кӳлли тавра шĕнчи пĕтĕм района Итали партизанĕсем хăйсем аллинче тытса тăраççĕ.

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 1‑мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçат çапла пĕлтерет: Венеци провинцинче 30.000 итальянец‑партизана яхăн кĕрешет. Вĕсен аллинче лайăх хĕçпăшал та çителĕклĕ, вĕсем Германи çарĕсемпе çапăçаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЙĔ ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1‑мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 1‑мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

ЯПОНИ ПАРЛАМЕНЧĔН 83‑МĔШ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ СЕССИЙĔ

ТОКИО, октябрĕн 31‑мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: Япони парламенчĕн 83‑мĕш чрезвычайнăй сессийĕ вăрçă вăхăчĕ тĕлĕшпе 14 законопроекта тата бюджет тĕлĕшпе 3 законопроекта ырланă.

Çавăн пекех тата хĕçпăшал туса тăракан компанисем çинчен калакан закона йышăннă. Малашне çавăн пек компанисем пурте правительство кăтартса панине пăхăнса тăраççĕ, хĕçпăшал туса кăларас тĕлĕшпе правительство умĕнче тулли ответ тытаççĕ.

Çав вăхăтрах сесси çар повинноçĕ çинчен калакан çĕнĕ закона йышăннă. Çав закон тăрăх, çара тата 5 çул ватăраххисене те илмелле. Çар повинность йĕрки Формоза утравĕ çинче пурăнакан халăха та пĕтĕмĕшпех тивет.

БЕНЕШ САМАХĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 28‑мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи районĕсенчен пĕринче Чехословаки республикине тунăранпа 25 çул тултарнине уявланă парадра республика президенчĕ Бенеш Чехословаки çарĕсене пана приказа вуласа панă.

Бенеш çапла каланă: Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчен Англие чех чаçĕсем килнĕ, вĕсем Англире тăракан чаçсемпе пĕрлешеççĕ, урăхла йĕркеленсе, татăклăн çапăçма хатĕрленеççĕ, тенĕ. Çарăн çав чаçĕсем Тобрука хӳтĕленĕ çĕрте çапăçнă. Унсăр пуçне, Чехословакин хăшпĕр чаçĕсем Российăра Харьковшăн пынă çапăçусене хутшăннă, тенĕ.

Чехословаки çарĕ вăрçă пуçланаччен Европăри çарсенчен чи лайăххи шутланса тănине астутарса, Бенеш малалла çапла каланă: «1938‑мĕш çулта эпир тӳссе ирттернĕ япала малашне пихăçан та пулмалла мар. Германие пирĕн çар хăватне пĕтерсе тăкса хăйсене чура тума ирĕк пăриччен тĕнчери пур патшалăхсем те темиçе хут та шухăшласа пăхĕç. Хамăр çĕршывăн никама пăхăнманлăхне тепĕр хут ура çине тăратнă хыççăн республика çарĕ наци пурнăçĕн пайĕ кăна мар, пĕтĕм тĕнчен оборонăллă вăйĕсен пайĕ те пулса тăрĕ. Вăл ирĕклĕ те вăйлă Чехословакире, ирĕклĕ демократиллĕ Европăра мирпе йĕркелĕхĕн никĕсĕ пулса тăрĕ. Великобританипе Совет Союзĕн çарĕсемпе пĕрле пĕтĕм нацисем пĕр‑пĕринпе туслăн çыхăнассине сыхласа тăрĕ».

Бенеш президентпа пĕрле Чехословаки премьер‑министрĕ Пранек, Чехословаки правительствин членĕсем, Чехословакипе Англи çарĕсенчи аслă офицерсем, çавăн пекех тата дипломатиллĕ корпусăн членĕсем пулнă. Вĕсем пурте парадра пулнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ÇАР МИНИСТРĔ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 30‑мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Çар министрĕ Стимсон пресс‑конференцире çапла каланă: ку эрнере пĕтĕм тĕнче Российăн кăнтăр пайĕнче пыракан вăйлă çапăçăва сăнаса тăчĕ. Ку пысăк çапăçу Днепр шывĕн пысăк кукринче пырать. Унта нимĕçсен темиçе çĕр пин салтакĕ çапăçать. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ наступленине чарса лартма тăрăшаççĕ. Малалла Стимсон çакна асăрхаттарнă: Хĕрлĕ Çар çав тери ăнăçлăн наступлени туса пыни вырăс салтакĕсем питех те чаплă кĕрешме пултарнинчен тата вĕсене ертсе пыракан руководительсен искусствинчен килет, тенĕ.

СССР ÇИНЧЕН ЧИ ЛАЙĂХ ЛИТЕРАТУРĂЛЛА ПРОИЗВЕДЕНИ ÇЫРАС ТĔЛĔШПЕ АНГЛИРЕ КОНКУРС ТУНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 30‑мĕшĕ. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕнчи çамрăксен туслăх комитечĕ СССР çинчен чи лайăх литературăллă произведени çырас тĕлĕшпе Англире конкурс тунă.

Преми илнĕ очерксене çак кунсенче паллă артистка Пэрл Байндер Лондонри Гаррик театрĕнче вуласа панă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ СОВЕТ ÇЫННИСЕНЕ ТИСКЕРРĔН МĂШКĂЛЛАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 28‑мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Бельгин информаци министерстви илнĕ хыпарсем тăрăх, гитлеровецсем Шарлеруа (Бельгия) районĕнчи икĕ лагерьти тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн мăшкăллаççĕ. Тыткăна лекнисене ирхине 4 сехетре тăратаççĕ те каçпа 11 сехетчен ĕçлеттереççĕ. Гитлеровецсем вĕсен çиййĕнчи ăшă япаласене пурне те тытса илнĕ. Тыткăна лекнисене выçă асаплантараççĕ, вĕсене тискеррĕн мăшкăллаççĕ тата хĕнеççĕ. Тыткăна лекнисем лагерьсенчех чирлесе вилеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти Атăл лешъенчи электростанцийĕнче яланлăха ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: теплосиловой цех пуçлăхĕ, электричество цехĕн пуçлăхĕ, топливăпа транспорт цехĕн пуçлăхĕ, инженер‑теплотехниксем, инженер‑электриксем, дежурнăй электротехниксем, электромонтерсем, пăс турбинисен машинисчĕсем, конденсаци тĕлĕшпе ĕçлекен машинистсем, компресорпа ĕçлекен машинистсем, насоссемпе ĕçлекен машинистсем, кочегарсем, шыв пăхакансем, тĕтĕм сăтакан трубасене пăхакансем, кĕл тасатакансем, мотористсем скреперщиксем, грузчиксем, çав сӳлте асăннă специальноçсене ĕçре вĕренес тесен арçын е хĕрарăм рабочисем.

Ĕçе кĕрекенсем валли хваттерсем пур, çимелли параççĕ тата пурнăçра кирлĕ ытти енсемпе те пулăшу параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, поселок Сосновка, отдел кадров Электростанции

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

[illegible] СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф-6 53 84 п. л.